# МАНМАÇÇĔ УН ЯТНЕ ЕНТЕШĔСЕМ

Чăваш Республикин патшалăх премийĕн лауреачĕ, «Сĕве Атăла юхса кĕрет» эпопея роман авторĕ Куçма Турхан /Кузьма Сергеевич Сергеев/ çуралнăранпа 85 çул çитнине паллă туса ирттерекен уяв писателĕн тăван районне те çитрĕ. Юпан 26-27-мĕшĕсенче Аслă Каçал тăрăхĕнче литературăпа искусство кунĕсем иртрĕç. Шупашкар хăнисенчен унта Раиса Сарпи поэт, Иван Христофоров юрăç тата эпĕ хутшăнтăмăр. Район центрĕнчи, Кивĕ Сĕнтĕрти, Турхан çуралса ӳснĕ Вăрманхĕрри Чурачăкри тĕл пулусем шоу пек мар, тăванпа тăван тĕл пулăвĕ пек иртрĕç. Сăвă-юрă хушшинчех ĕçлĕ калаçу та хускалчĕ. Илемлĕ сăмахшăн тунсăхласах çитнĕ район çыннисем. Юрă кассетисене тупса илме пулатьха, çĕнĕ кĕнеке тесен, ăна алла тытса курманни темиçе çул та çитет теççĕ вĕсем.

Культура ĕçченĕсем куншăн писательсене кăна ята кĕртеççĕ. Районти культура çуртне пуçтараннăскерсем, вĕсем темиçе çул хушшинче капланнă кӳренĕвне пĕтĕмпех каласа парасшăн пулчĕç. Район музейĕнче те çав калаçуран пăрăнма пулмарĕ. Кунта культура ĕçĕн ветеранĕсемпе вĕсен выраннe йышăнса юлнисем тĕл пулчĕç. Шупашкар хăнисем ваттисемпе çамрăккисемшĕн те хапăллана çынсемех пулчĕç.

Иртнĕ çул Лаврентий Таллеров 70 тултарнине паллă тума районĕпех хатĕрленнĕ. Кăçал Гурий Чаржов хăйĕн 60 çулхи юбилейне килессе кĕтнĕ. Унчченхи çулсенче кунашкал паллă кунсене кашнинчех пĕрле паллă тунă. Кивĕ Сĕнтĕр ял библиотекинче ĕçлекен, вăлах ял старости те, Галина Смирнова хăйĕн савăнăçне пытараймарĕ. Çав вăхăтрах чăваш писателĕсем хăçан юлашки хут ялта пулнине тĕрĕс аса илеймерĕ. Ырă йăласене çĕнĕрен чĕртсе тăратас тесе тăрăшакансене тав тума манмарĕ. Куçма Турханăн тăван районĕнчи уявне район администрацийĕ, ЧР Писательсен союзĕ тата «Кĕтне» ентешлĕх хутшăнчĕç. Шупашкар хăнисене администраци пуçлăхĕн ĕçĕсене туса пыраканĕ А.Е.Потемкин йышăнчĕ. Районти культура пайĕн пуçлăхĕ В.С.Васильев кашни тĕл пулăвах хутшăнчĕ. Çĕнĕрен чĕрĕлнĕ йăлан ĕмĕрĕ вăрăм пултăрччĕ.

**Д.ГОРДЕЕВ.**